Хитре те илĕртӳллĕ, кăмăллă та пултаруллă... кукаçи

Паллă çынсен пурнăçĕ пире яланах кăсăклантарать. Халăх умĕнче вĕсем, хитрескерсем, сыпăçуллăскерсем, яланах йăлкăшаççĕ, йăл кулаççĕ, чечек айне пулаççĕ... Анчах çын куçĕ курман çĕрте – чаршав хыçĕнче – мĕн пулса иртет? Çакăн çинчен уçсăн калаçма эпир «ЧХ» чаршавĕ хыçне халăх юратакан юрăçа, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистне Василий Раймова чĕнтĕмĕр.

Василий Раймов Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимеш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шкул хыççăн Шупашкарта заводра ĕçленĕ. Сцена илĕртнипех, тен, Пукане театрне çитнĕ. Унта пуканесене 5 çул «калаçтарнă», хушăран «юрлаттарнă» та. Театр валли ятарласа çыракан композитор Г.Лебедев каччă сассине илтсен ăна çак енĕпе малалла вĕренме сĕннĕ. Шăпа нумай чухне ырă çынсене пула аталанать: çапла Василий Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче вокал уйрăмĕнче ăсталăхне туптанă. Вĕрентекенĕ Т.Супонина ăна ĕçе вырнаçмашкăн юрăпа ташă ансамбльне кайса пăхма сĕннĕ. Раймов сасси ансамбль ертӳсисене те килĕшнĕ. Унтанпа нумай та мар, сахал та мар – 30 çула яхăн иртнĕ.

30 çул каялла

– Василий Васильевич, хыçалалла çаврăнса пăхсан хăв утса тухнă çул çинче мĕн улăштарнă пулăттăн?

– Нимĕн те. Шăпама лайăх хĕрпе паллаштарнăшăн тав тăватăп. Мария Терентьевнăпа 30 çул ытла пĕр çăвартан тенĕ пек пурăнатпăр. Вăл мана яланах ăнланатчĕ, халĕ те çаплах. Артистпа пурăнма çăмăл мар вĕт – гастрольсене тухса кайсан киле 2-3 уйăх та пырса çакланаймастăмăр. Мăшăр маншăн яланах тĕрек пулнă.

– Гастрольсенче вăхăта мĕн туса ирттереттĕр? Ăнланатăп-ха: каçхине кичемленсе ларма вăхăт çук – концерт. Кăнтăрла вара? Вĕçĕмсĕр канса та ывăнтарать-çке...

– Çамрăкрах чухне çĕлеттĕм...

– ???

– Эпĕ хам тĕллĕн касса çĕлеме вĕреннĕ. Килте алăпа çаврăмалли çĕвĕ машини пурччĕ те темĕн те янтăлаттăм: шăлавар, кĕпе, блузка... Гастроле те машинăна пĕрлех илсе çӳреттĕм – пушă вăхăтра мĕн ĕçлес? Вăл вăхăтра пирĕн лавкксене пит хитре япаласемех çукчĕ вĕт. Джинс йышши шăлавар çинчен вара калаçма та кирлĕ мар. Эпĕ вара пĕр каçра 5-6 шăлавар та çĕлесе хураттăм, ирхи 4 сехетчен ларни те пулнă. «Комиссионка» йышши лавккасене кайса параттăм та тепре çĕлесе пыриччен сутса та пĕтеретчĕç.

– Эсĕ çемйӳне выçă лартман апла.

– Çук, ун чухне хальхинчен те тулăхрах пурăннă эпир. Акă кооперативсем йĕркеленсе кайрĕç. Пĕрин пуçлăхĕ мана хăй патне ĕçе те чĕннĕччĕ. Унăн сĕнĕвĕ пирки пĕр кун шухăшласа çӳрерĕм. Анчах – йышăнмарăм. Эпĕ, Раймов, пуç çĕклемесĕр çĕвĕ машини умĕнче тăрăлтаттарса ларатăп – çак ӳкерчĕке куç умне кăлартăм та...

– Юрать укçа хыççăн хăваламан эсĕ ун чухне, чăваш халăхĕ мĕн чухлĕ хитре юрра илтмесĕрех юлатчĕ вĕт! Çапах та кăсăклă пĕр ĕç çинчен каласа кăтарт-ха: сана нимĕç хĕрарăмĕ машина та парнеленĕ теççĕ.

– Пулнă ун пекки. ФРГра нимĕç пĕр çемйине хваттере ячĕç пире, эпĕ кил хуçи арăмне хам çĕленĕ юбкăпа блузкăна парнелерĕм. Хайхи ман япаласене килĕштерчĕ курăнать: «Ăçтан кусем?» – тет. Хам алăпа янтăланине пĕлтерсен тепĕр пӳлĕме кайрĕ те... çĕвĕ машини йăтса тухрĕ. «Сана валли, – тет. – Презент». Машини! Пĕчĕк кăна, электричествопа ĕçлет, йăтса çӳреме те питĕ меллĕ. Каярахпа вара гастрольсене унпа çӳреме пуçларăм.

Атăл урлă каçнă май...

– Пултарулăх патне тавралăх нар-ха. Тепĕр чухне ĕмĕре юрласа, анчах халăхра йĕр хăвармасăр ирттерме пулать, хăш чухне вара пĕр юрă та чапа кăларать. Сана ку енчен шăпа кӳрентермен темелле.

– Малтанхи вăхăтра Ю.Жуковпа В.Шемекеев çырнă «Ан хурлан» юрра юрламасăр сцена çинчен ямастчĕç. Радиора пĕрремĕш Ю.Андреевăн «Ĕмĕт» юррине çыртăм – ăна та халăх питĕ килĕштерчĕ. Паллах, тав сăмахĕ малтан – авторсене. Каярахпа Р.Петровпа, И.Степановпа, О.Кăйкăрпа, Р.Волковăпа, В.Романовпа – сăмах май, вăл ятарласа мана валли çырать – ĕçлеме пуçларăм.

– Халĕ вара хăна-вĕрле пухмасерен килĕрен тенĕ пек «Атăл урлă каçнă чух» юрруна шăрантараççĕ...

– Радио, телекурав фондĕнче 100 ытла юрă упранать. 150 яхăн юрра пухса «Атăл урлă каçнă чух» çĕнĕ диск кăлартăм. Çак юрра кукамайран вĕренсе юлтăм. Пире, ирех атте-аннесĕр тăрса юлнă 2 хĕрпе 2 ывăла, вăл пăхса ӳстернĕ вĕт. Çирĕп тытатчĕ. Унсăр майĕ те пулман. Çемьене тăрантарас тесе ĕне усранă кукамай. Çав вăхăтрисен пĕлесçĕ: çак выльăха усрама мĕн тери йывăр пулнă ун чухне! Ăна тăрантарассишĕн, хĕл каçарассишĕн питĕ нумай вăй хума тиветчĕ. Пирĕн килте вара вăй питти çын пулман... Эпир ĕçрех ӳснĕ, тантăшсемпе выляма та вăхăт пулман. Анчах çакăншăн кукамая тав тăватпăр кăна. Чунĕпе ырăччĕ вăл – ăна ялĕпех «кукамай» тесе чĕнетчĕç. Эпир ӳссен тĕрлĕ еннелле салантăмăр. Канмалли кунсенче мăнукĕсем яла пухăннине питĕ юрататчĕ вăл, тутлă çимĕçпе сăйлама тăрăшатчĕ. Эпĕ сцена çине тухнине курса ĕлкĕрчĕ çывăх çыннăм...

– Тăлăхсен шăпи апла ахальтен мар ыраттарать сан чунна...

– Эпĕ хамăн концертсене интернатсенче ӳсекенсене ялан чĕнетĕп. Ашшĕ-амăшĕн ăшшисĕр аталанма çăмăл маррине хам тӳссе курнă, пĕлетĕп. Модăна пăхăнса мар, чун ыйтнипе вĕсене çапла майпа та пулин савăнăçлă самантсем кӳрес килет. Сăмах май, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Ухсай керменĕнче иртекен концертра та, акан 2-мĕшĕнче йĕркелекен пултарулăх каçĕнче те вĕсем валли вырăн тупăпах.

«Пуринпе те... чей ĕçсе çитерес çук»

– Паллă çын пулассишĕн нумайăшĕ çунать. Анчах кашни медалех икĕ енлĕ – чапăн тӳнтер енĕсене курма-тӳсме сана та тӳр килнĕ-тĕр?

– «Маншăн пур пĕрех», – текенсене ĕненместĕп, хам пирки ун пек калаймастăп. Хăвна ытисем палласа илни кăмăллă паллах. Тепĕр чухне хăшĕ-пĕри тĕл пулать те ĕмĕр палланă çын пек калаçать. Уйрăлса утсан шухăшласа халтан каятăп вара – кам пулчĕ-ши? Анчах чапăн тӳнтер енĕ те пур çав. Эпир те çынахçке: тепĕр чухне чирлесси те, кăмăл пусăрăнни те пулать. Ун пек самантра çын куçĕ умне пит курăнас, паллаттарас килмест те çав... Анчах шăп çавăн пек чухне çине-çинех пĕри те тепри: «Раймов! Эпир сана питĕ килĕштеретпĕр!» – теççĕ. Пĕри те тепри пĕрле пĕрер черкке ĕçесшĕн. Чап тени пирĕн çапларах çаврăнса тухать вĕт: паллă çынпа шаккаса черкке çĕклени пысăк ĕç пурнăçланăнах туйăнать... Пĕрре вара пăтăрмаха та çакланнăччĕ. Юрать арăм ăнланать те. ...Концерт пуçланман-ха, сасартăк манăн телефон шăнкăртатать. Палламан хĕрарăм фойене чĕнет, эпĕ вара сцена костюмĕпеччĕ ĕнтĕ. Кассăра билет туянма сĕнетĕп хайхискерне. Паллах, зала анса çӳреймерĕм. Концерт хыççăн килте канатăп. Ирхи 4 сехет. Каллех телефон шăнкăртатать. Каллех çав сасă, хальхинче чей ĕçме чĕнет. 3 уйăха яхăн канăç памарĕ вĕт. Телефона арăм тытсан калаçмасть тата хăй... Халĕ кӳренчĕ пулас – шăнкăрвламасть...

– Пĕр фанаткăна çухатрăн апла...

– Çапла пулса тухать. Паллă çын пулнипе йăрă çынсем усă курма та хăтланнăччĕ-ха – пĕр фирма сăра кĕленчи çине хампа калаçмасăр-килĕшмесĕр... сăнăма вырнаçтарнă! Автор правине хӳтĕлесси пирки ун чухне пирĕн çĕр-шывра калаçма та пуçламанха. Суда çитермерĕмĕр ĕнтĕ ĕçе – калаçса татăлтăмăр.

«Çылăхсăр мар...»

– Сан пирки: «Халĕ сцена çине хитре каччă тухать», – тесе пĕлтерсен куракана хитре куллуна парнелесе яланах тӳрлететĕн: «Кукаçи!» Ĕненес те килмест...

– Çакăн пек хисеплĕ ят чăнласах пур манăн /кулать/. Мăшăрăмпа икĕ хĕр ӳстертĕмĕр. Икĕ мăнук – чун йăпатмăшĕ. Асли Денис 6 çулта, кĕçĕнни Дима – 5-ре. Ачамсем ман пултарулăхпа питех кăсăкланмаççĕ пулсан мăнукăмсем кашни концерта çӳреме хатĕр! Çакă хама та питĕ хавхалантарать. Иккĕшĕ те юрăмсене вĕçĕмсĕр итлеме пултараççĕ. Юрăç пулĕç тесе калама иртерех-ха – пĕри спорт, тепри çар пирки ĕмĕтленет – çапах та кам пĕлет...

– Кукашшĕне хывнă тăк сцена çинче Василий Раймов тăсăмĕ пулассиех иккĕлентермест. Эсĕ вара çакна кала-ха: яш каччăн илĕртӳлĕхне мĕнле майпа упраса хăварма пултарнă? Вăрăм ĕмĕрлĕ, çамрăк курăнакан çынсенчен ыйтатăн та вĕсен пĕр хурав – эрех ĕçмен, чĕлĕм туртман, юттисемпе айкашман... Сан пирки çылăхсăр теейĕмĕн...

– Çук ĕнтĕ, эпĕ те çынах вĕт – ыттисен пур çылăх манран та пăрăнса иртмен. Сцена ватălма памасть – çавă кăна. Артистăн ватăлма юрамасть. Эпир сцена çине куракана савăнтарма тухатпăр вĕт-ха, апла хамăрăн та хавасла курăнмалла.

«Пахчара – шăл айне хумалли кăна»

– Журналистсем юратакан ыйтуран эпир те пăрăнса иртер мар-ха: пушă вăхăтра мĕнпе аппаланма юрататăн? Халĕ лавккара темĕн те сутаççĕ – текех шăлавар çĕлеместĕн-тĕр?

– Халĕ пушă вăхăтăма мăнукăмсене халалатăп. Пахчара чаканма юрататăп – икĕ дача пирĕн, пĕри хуларах. Чăн та, ямăттине хапсăнакансем кĕрсе çĕмĕрсе хăварса чуна илеççĕ. Кĕркунне пур япалана та хваттере куçарса çырсах хăваратăп: «Сире валли нимĕн те çук», – тесе. Пур пĕр аркатаççĕ.

– Ӳркенменскер, пахчунта та темĕн те пĕр ӳстеретĕн пулĕ-ха...

– Çук, шăл айне хумалли кăна унта. Мунча пур тата. Эрнере икшер те хутатпăр. Юлташсемпе канма юрататпăр унта. Тепĕр чухне ансамбльтен 20-шер çын та каяттăмăр. Çĕре пăхса тăракан алă кирлĕ – çакна ăнлантăм халĕ. Тепĕр дачине час-часах пулаймастпăр. Унти çимĕçсем хуçасăр тунсăхлаççĕ – иртнĕ çул слива пуçне усрĕ...

«Ĕçĕме кура хаклаççĕ»

– Ансамбль пирки сăмах пуçарнă май саншăн кăмăллăх мар самант пирки те хускатас килет...

– Эсĕ «халăх артисчĕ» пирки пулĕ-ха. Вăрттăн каласан, пурте кĕтсе тăраççĕ çак ята... Йĕпреçсен ентешлĕхĕ /эпĕ унта ертӳçĕ çумĕнче тăрăшатăп, маларах культура ыйтăвĕсене татса параттăм/, район администрацийĕ паян тесен паян сӳме хатĕр, анчах йĕркепе килĕшӳллĕн официаллă ĕç вырăнĕнчен хатĕрлемелле документсене... Çамрăкрах чухне, чăн та, чуна ыраттаратчĕ ку. Çапах та, ансамбль тĕп солисчĕсенчен пĕри вĕт-ха. Ятарлă пĕлӳ те илнĕ... Халĕ вара ман пирки ахаль те «халăхăн» тесе палăртаççĕ: ĕçĕме кура çынсем чăнласах хаклаççĕ. Ку – чи пĕлтерĕшли. Кусран пăхма пĕлменни ура хучĕ-тĕр. Анчах манăн кусран пăхма сăлтав та пулман. Ансамбле килнĕ чухнех уйрăм хваттерте пурăннă эпир. Мăшăрăм ача сачĕн заведующийĕнче ĕçленĕ – хамăрăн пепкесене вырнаçтармашкăн ыйтма эпир пуçлăхсем патне мар, пĕрле юрлакансем арăм патне пыратчĕç. Çемьене тăрантармалăх, каларăм ĕнтĕ, май тупнă эпĕ. Ĕçрен мана нимĕн те кирлĕ пулман.

Ансамбле вара тав сăмахĕ кăна калас килет. Ĕмĕр унтах иртĕ темелле, унтах çын пултăм. Ансамбльте 1983 çулта юрлама пуçланăччĕ, илемлĕх ертӳçи Ю.Васильев çултаăкранах уйрăм номерсемпе кăларма пуçларĕ. Совет Союзĕнче эпир çитсе курман вырăн юлмарĕ-тĕр, 9 ют çĕр-шывра – патшалăх шайĕнче – пулса куртăмăр: Испани, Египет, Германи, Франци, Бельги... Пултарулăхăм анинче Юрий Васильевич тӳпи питĕ пысăк. Ятласа та, вĕрентсе те, хавхалантарса та ӳсме пулăшрĕ.

«Чи хитре юррăм – малашлăхра-ха»

– Темĕнле сыв пуллашнă, пĕтĕмлетнĕ евĕрлех хускалса кайрĕ калаçу...

– Сыв пуллашма иртерех, чи хитре юррăма халăх патне çитермен-ха. Малашлăхра-ха вăл. Пысăк ĕмĕт-тĕллевпе пурăнатăп – хам мĕн пĕлнине çамрăксене парса хăварас килет. Пултаруллă яш-кĕрĕмрен эстрада-фольклор ушкăнĕ чăмăртарăмăр. Халăх умне тухмашкăн кăшт çеç çитмест – чăвашла юрлакан тепĕр хĕр кирлĕ тата... ушкăн ячĕ. Хальлĕхе шыратпăр-ха.

– Василий Васильевич, уççăн калаçма килĕшнĕшĕн тавах. Журналистсем умĕнче чунна шикленмесĕрех уçатăн-и?

– Пĕррехинче çапла «интереслĕ япала» ыйтнăччĕ манран... Хамăн та шӳтлес кăмăл тапса тăнă ахăртнех: эпĕ те ӳстеререх калаçрăм, журналистăн фантазийĕ тата пуянрах пулнă курăнать. ...Статйине хам вуламан-ха – хунькассине кайрăмăр. Арăмăн ашшĕ-амăшĕ çырăнман-ха вăл хаçата. Кӳрши илсе тăрать-мĕн те пирĕннисене кĕрӳшĕ çинчен вуласа пĕлме кăсса панă – «ырă сунса». Çитрĕмĕр те – хуняçа калаçмасть манпа. Мĕн пулнă? Кăмăлне аран-аран çавăртăм вĕт кайран!

Калем ăстисене пĕр вăхăт кӳреннĕ пулин те вĕчĕ тытса çӳремен юрăçа чаршав пĕр хĕррине те пулин сирме кăмăл тунăшăн тав тăватпăр. «ЧХ» тĕпелне татах та кĕрсе тухма чĕнетпĕр. Тен, унччен «халăх» шайне те хăпарĕ те çитес интервью татах та кăсăклăрах пулса тухĕ. Анчах ку йăлтах – малашлăхра...

Рита АРТИ калаçнă.